Ырă кăмăл наци проектĕнчен те пахарах

# “Манар мар: çăкăр-тăвар хире-хирĕç”, –



Шкул директорĕпе Игорь Александрович Ивановпа физика учительници Лидия Ивановна Желтова Николай Васильевич Еропанов аллинчен çĕнĕ йышши компьютер илнĕ самант.

терĕ хăйне пурнăç çулĕ çине анлă пĕлӳ илсе тухма май панăшăн тав туса Москакассинчи тăван вăтам шкул коллективне савăнăçлă лару-тăрура пиллĕкмĕш ăрури çĕнĕ йышши компьютер парнеленĕ май районта компьютеризаци ĕçне тивĕçлĕ шайра туса пыракан “БАЙТ” чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Николай Васильевич Еропанов. Шкула тетпĕр те, анчах парне шкул директорĕпе юнашар тăракан физикăпа математика учительницине Лидия Ивановна Желтована вĕрентӳ ĕçне çĕнĕлле йĕркелесе пыма тивĕçрĕ. Ăçтан пуçланать-ха çак парнен никĕсĕ? Ырă кăмăлтан, çын ĕçне шута хума пултарнинчен, усă курнă ĕçшĕн тав тума пĕлнинчен.

– Çак шкултан 1989 çулта вăтам пĕлӳ илсе пурнăç çулĕ çине тухрăм. Вĕрентекенĕмĕрсем ăс пани паян та асра. Вĕсем хăйсен сывлăхне тата вăхăтне шеллемесĕр пирĕншĕн тăрăшни çине паянхи кун çӳллĕшĕнчен пăхатăп та, пысăк тава тивĕç вĕсем. Ăна нимĕнле укçапа та виçсе хаклама çук. Çакна паян шкулта вĕренекенсем асра хăварасса шанатăп, – терĕ хăйĕн пĕрремĕш класс ертӳçине Л. Желтована çĕнĕ компьютер тыттарнă май Н. Еропанов.

Çак парне Лидия Ивановнăшăн та ăнсăрт пулăм мар. Ĕçпе тивĕçнĕ вăл ăна. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче 1982 çулта физикăпа математика факультетне пĕтернĕ хыççăн Москакасси шкулне килнĕ çамрăк учительница пĕрремĕш кунранпах ачасемпе тачă та туслă çыхăну йĕркеленĕ: вĕсемпе пĕрле вылянă, сăртран çунашкапа ярăннă, хуйхă-савăнăçра юнашар пулнă. Çулсем иртнĕ, анчах ачасен малашлăхĕшĕн тăрăшасси унăн çав шайрах юлнă. Çапла вара хастар учительница хăйĕн пуçарăвĕпе иртнĕ çул вĕçĕнче икĕ уйăхра хăйне çирĕплетсе панă физика кабинетне хăй ертсе пыракан 9 “б” класс ачисемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем, пĕрле ĕçлекен технологи учителĕ Ю. Иванов пулăшнипе тĕплĕ юсаса хăт кĕртнĕ. Çакăншăн парне пулчĕ те ĕнтĕ ăна хăйĕн малтанхи вĕренекенĕ пулнă Н. Еропановăн шĕвек кристаллă мониторлă компьютерĕ.

– Паян манран телейлĕ вĕрентекен çук та пулĕ. Ман



Юлашки икĕ уйăхра Л. Желтова пуçарăвĕпе тата 9 “б” класра вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен пулăшăвĕпе çĕнĕ хăт кĕнĕ класра малалла уроксем компьютер пулăшăвĕпе иртĕç.

ĕçе шута хуракансене лайăххине-ыррине кăна сунатăп. Хамăн вĕренекенсем пурнăç аталанăвĕнче çакăн çӳллĕшне çитнишĕн савăнатăп, – терĕ тав сăмахĕнче аслă категори учителĕ, виçĕ çул каялла “Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ” паллăна тивĕçнĕ Лидия Ивановна Желтова.

“Çăкăр-тăвар хире-хирĕç”, – тенĕ çынна ырă туни каялла вунă хут сумлăрах таврăннине палăртса ватă асаттесемпе асаннесем. Çак кивелмен сăмахсем, акă, каллех çиеле тухрĕç. “Ырăлăх туйăмне çухатман пур çынсемшĕн те çапла пултăрччĕ вăл”, – тесе вĕçлетĕп хамăн сăмахăма пурнăçра ырриех вăй илессе шанса тата пирĕн пурнăçра ырри ытларах пулнине çирĕплетекен тепĕр тĕслĕхпе паллаштарса.

Н. Еропанов Москакассинчи вăтам шкула çĕнĕ компьютер парнеленине халалланă савăнăçлă линейкăна Иван Николаевич Никитин предприниматель те хутшăнчĕ. Вăл шкула тата малашлăхпа ĕçлекен вĕрентекене физика кабинетне малалла аталантарма 5 пин тенкĕ спонсорла пулăшу пачĕ. Çапла çав вăл, мĕн акатăн çавă шăтать, тенĕ пек, ырă ĕç те ырринех çуратать.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ПРИСЯГА — Районти шалти ĕçсен пайĕнче

# Саккуншăн ĕçлĕп, халăхшăн вăй хурăп

Иртнĕ кĕçнерни кун, кăрлачăн 18-мĕшĕнче, районти шалти ĕçсен пайĕнче хăйне евĕр савăнăçлă уяв пулчĕ: тин çеç коллектива ĕçе килекен Леонид Александрович Кузнецов инженер-электроникпа патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн уйрăмĕн пропаганда инспекторĕ Сергей Владиславович Иванов ĕçтешĕсем умĕнче савăнăçлă лару-тăрура хăйсем шалти ĕçсен пайĕнче РФ Конституцийĕпе саккунĕсене хисеплесе, çирĕп пăхăнса, гражданинăн прависемпе ирĕкне хĕсĕрлемесĕр ĕçлеме, пуçлăхсем хăйсене панă приказсене тата служба тивĕçĕсене таса кăмăлпа пурнăçлама, хăйĕн сăмахĕсенчен иртсен РФ Саккунĕсемпе килĕшӳллĕ явап тытма хатĕрри пирки присяга тытрĕç.

Çак кунах вĕсене районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.Макаров РФ Шалти ĕçсен министрĕн приказĕпе милици лейтенанчĕн званине тата табель пистолечĕсене пачĕ.

– Сирĕн алăри хĕç-пăшал обществăри мирлĕ лару-тăрăва сыхлама тата преступниксене тытса чарма кăна каясса шанса тăратăп, – терĕ Евгений Дмитриевич çамрăксене ырă служба сунса.

**А. ПЕТРОВ.**





**Сăн ӳкерчĕксенче: шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем стройра; Е. Макаров С. Иванова милици лейтенанчĕн пĕрремĕш ятарлă званине панă самант; “Саккуна пăхăнса халăхшăн тăрăшăп”,– терĕ присяга самантĕнче милици лейтенанчĕ Л. Кузнецов; тин кăна присяга тытнисем ĕçтешĕсемпе тата Муркаш лицейĕнчи кадетсемпе.**

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**





Юн кунсенчи рубрика

# САККУН ВĂЛ ПУРИНШĔН ТЕ ПĔРРЕ

***Паянхи рубрикăна район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ, 3-мĕш класлă юрист Сергей Александрович КАБУРКИН ертсе пырать.***

## Укçа асăрханулăха юратать



**Иртнĕ çулхи çу кунĕсенче Мăн Сĕнтĕрте “Рассвет” агрофирма” кассинчен пурнăçланă ĕçшĕн ĕç ушкăнне тӳлеме пăхнă укçа пĕр çын кĕсйине кĕрсе ӳкнине мĕнле ăнланмалла тата çак лару-тăрура тĕрĕслĕх çиеле тухрĕ-ши?**

**Н. КУЛЬКОВ, Л. ЧЕРНОВ.**

Ку ĕç пирки сăмах пуçарнă май çакна калатăп: асăннă тĕслĕх кашни ертӳçĕшĕнех вырăнлă пулма пултарасси пирки паян никамăн та иккĕленӳ çук. Ĕç параканăн ку чухне килĕшӳ туса ĕçлекенсемпе тата вĕсене пурнăçланă ĕçшĕн тӳлессипе питех те асăрхануллă пулмалла. Çакна çирĕплетет те ĕнтĕ Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче пĕлтĕрхи март уйăхĕнче “Рассвет” агрофирмăпа, А. Князев гражданин хушшинче пулса иртнĕ ĕç. Вулавçăсем те ыйтăва шăпах ун пирки пуçланă курăнать. Лару-тăру вара кунта çапла аталаннă. Муркаш районĕнчи “Рассвет” агрофирма” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн 1-мĕш номерлĕ сĕт ферминче хуçалăхри 35-мĕш номерлĕ приказпа 2006 çулхи мартăн 6-мĕшĕнче тĕп производство участокĕн бригадирне çирĕплетнĕ А.В.Князев вăрлас шухăша тĕпе хурса ферма ĕçченĕсене ведомоçпе ĕç укçи пама хуçалăх кассинчен хăйне 2006 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче 926-мĕш номерлĕ расхутлă касса ордерĕпе панă 30000 тенкĕ укçана Н.В.Ванюшкинана 4150 тенкĕ, Н.П.Колесникована 1600 тенкĕ, И.Э.Парфенована 2200 тенкĕ, Н.Н.Кулькована 2400 тенкĕ, Ю.И.Викторована 1500 тенкĕ,В.В.Ванюшкина 1700 тенкĕ, М.К.Пакшандаева 1500 тенкĕ, Н.В.Кудикова 1500 тенкĕ, Е.Л.Ванюшкина 1500 тенкĕ, М.А.Николаева 200 тенкĕ, Л.Б.Чернована 1600 тенкĕ, И.М. Чернова 1500 тенкĕ, С.В.Яшмолкинана 3000 тенкĕ, М.А.Блинована 1190 тенкĕ, Н.А.Бусыгинана 1600 тенкĕ, А.Л. Николаевана 1700 тенкĕ, Н.И.Кулькова 800 тенкĕ валеççе парас вырăнне хăйĕн кĕсйине чикнĕ. Çапла майпа вăл “Рассвет” агрофирма” чикĕллĕ яваплăхлă обществăна 30000 тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ.

Судра А.Князев хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ...

Çак тĕслĕх пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çĕнĕ çынна ĕçе илнĕ чух тата ун аллине укçа панă чух питех те асăрхануллă пулмалли пирки калать. Пирĕн тĕслĕхре А.Князев вăрланăшăн унччен те судпа айăпланни палăрчĕ. Укçа шута юратать тени çакнашкал тĕслĕхшĕн питех те вырăнлă сăмах.

Суд А.Князева ют пурлăха хапсăннăшăн пĕр çуллăха ирĕкрен хăтарма йышăнчĕ.

## Налук тӳлевĕ саккунлăха пăхать

**Предприяти-организацисем тата уйрăм çынсем налук тӳлени социаллă пурнăç аталанăвĕ çинче яр уççăн курăнать. Çакăнти йĕркелĕхе прокуратура епле пăхса пырать?**

**И. СВИСТКОВА, А. ПЕТРОВА.**

Налук тӳле те лăпкă çывăр – çак ыйтăва хускатаççĕ хаçат вулакансем. Налук епле пуçтарăннипе çынсем кăсăкланни – ырă пулăм. Район прокуратури те Раççей Федерацийĕн Генеральнăй прокурорĕн 2005 çулхи февралĕн 11-мĕшĕнчи приказĕпе (“Налук законодательствине пурнăçлассине тĕрĕслессипе прокуратура эффективлăхне ӳстерессе çинчен”) хĕç-пăшалланса ăна 2006 çулта хăйĕн ĕçĕн тĕп пайĕ тесе вăй хучĕ. Çапла вара районта налуксемпе пулакан парăмсене чакарассипе пĕлтĕр эпир сахал мар ĕç туса ирттертĕмĕр. Тĕслĕхрен, налук тӳлевĕпе 100 пин тенкĕ ытла парăмлă предприятисене уйрăм тĕрĕслев çине илтĕмĕр. 2006 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти предприяти-организацисен налук парăмĕ виçĕм çулхинчен 24,155 млн. тенкĕ пĕчĕкленни, пĕтĕмĕшле налуксемпе пухусен парăмĕ (унта бюджет тулашĕнчи фондсем те, Пенси фондне каякан страховани взносĕсем те т. ыт. те кĕреççĕ) вара çулталăк хушшинче 7,648 пин тенкĕ сахалланни экономика малалла утăмлани пирки калать.

Раççей Федерацийĕн Генеральнăй прокурорĕн маларах асăннă приказне пурнăçласа район прокурорĕ çумĕнчи ĕç ушкăнĕн 12 ларăвне ирттертĕмĕр. Унăн ĕçне налук службин, район администрацийĕн, суд приставĕсен представителĕсем хутшăнчĕç.

Индивидуаллă предпринимательсем, транспорт хуçисем налук тӳлесси те самантлăха та тимлĕхсĕр юлмарĕ. Налук инспекцийĕн ыйтăвĕсене пурнăçламаншăн пĕлтĕр 9 налук тӳлекен уйрăм çынна административлă явап тыттарма тиврĕ. Кусемсĕр пуçне тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе суда 90 иск çырăвĕпе 60 пин тенкĕлĕх налук шыраса илессипе тухрăмăр.

## Суту-илӳ йĕркине пăснăшăн

**15–20 çул каялла магазинсене тăтăш тĕрĕслесе унта саккуна пăснă тĕслĕхсемпе халăха паллаштаратчĕç. Саккунĕсем паян нумай, анчах ку ĕçе халĕ прокуратура та тумасть-ши?**

**Дарья СЕРАФИМОВА.**

Хăш организаци епле те, анчах прокуратура асăннă ĕçрен айккинче тăмасть. Иртнĕ çул налук инспекторĕсемпе районти потребительсен обществисен тата уйрăм предпринимательсен суту-илӳ точкисене тăтăш тĕрĕслерĕмĕр, çитменлĕхсемпе саккуна пăрăнса тунă утăмсене пĕрре мар тупса тăрă шыв çине кăлартăмăр. Акă, С.С.Ксенофонтов индивидуаллă предпринимателĕн “Весна” магазинне тĕрĕсленĕ чух кунта Молдавире туса кăларнă “Священный меч”, “Магия взгляда” хĕрлĕ эрехсене тавар-транспорт накладнойĕсем çумне кирлĕ справкăсемсĕр сутни, “Священный меч” эрехĕн вара пахалăх сертификачĕ пулманни куç умне тухрĕ. Ку фактпа район прокуратури административлă йĕркене пăсни пирки административлă ĕç пуçарчĕ, алкоголь продукцине конфискацилерĕ. Çакăн евĕр çитменлĕхсемех В.А.Кузьминан “Тополина” магазинĕн ĕçĕнче те çиеле тухрĕç.